27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
1
ШАМАТКУН
65(6560) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени туса пырса, ОЧАКОВ хулипе крепоçне туртса илнĕ. Вăл хула нимĕçсен оборонин паха пунккĕ пулса тăнă, Днепрпа Буг Лиманне кĕмелли вырăна питĕрсе тăнă.

ОЧАКОВ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ЦВЕТАЕВ генерал-полковникăн, НИКИТИН полковникăн, ДОРОФЕЕВ полковникăн çарĕсем, МАЗОВСКИЙ полковникăн, ПОРТНОВ подполковникăн артиллерисчĕсем, ФУРС полковникăн саперĕсем тата НЕЙМАРК подполковникăн морякĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ОЧАКОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ОЧАКОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 31-мĕшĕнче, 20 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуниккĕ хут пăр харăс персе, ОЧАКОВ хулине туртса илнĕ УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ОЧАКОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пуçнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи мартăн 31-мĕшĕ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне Михаил Иванович Калинина

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ВКП(б) Обкомĕ Сире, большевиксен партине пуçарса яракансемпе ертсе пыракансенчен пĕрине, Ленинпа Сталинăн соратникне, Социализмлă Ĕç Геройĕн аслă ятне илнипе саламлать.

Партипе правительство Эсир хамăрăн Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн тунă пысăк ĕçсене тивĕçлипе хакларĕ. Орденлă Чăваш республикинчи ĕçсыннисем Сире, Михаил Иванович, Социализмлă Ĕç Геройĕн чаплă ятне пани çинчен пĕлтернине питĕ хытă савăнса кĕтсе илчĕç.

Пĕрер тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма фронта ытларах пулăшассишĕн эпир тата та ытларах вăй-хал хурса ĕçлĕпĕр тесе шантаратпăр. Эпир Сире Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем ялхуçалăх культурисемпе вылăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстерессишĕн хăйсен пĕтĕм вăйне парĕç тесе шантарса калатпăр. Пирĕн республикăна 1943 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсемшĕн панă Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр аларах тытса тăрассишĕн кĕрешĕпĕр.

Сире, хаклă Михаил Иванович, хамăрăн юратнă Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн нумай çулсем пурăнса ĕçлеме ырă сунатпăр.

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр Михаил Иванович Калинин!

Сывă пултăр аслă çулпуç тата полководец — пирĕн атте, учитель, тăван Сталин!

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ПРЕЗИДИУМĔ
ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔ
ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, ПРУТ шывĕ урлă каçнă та Украинăн ЧЕРНОВИЦЫ ятлă область хулине туртса илнĕ. Вăл Çурçĕр Буковинăн хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи паха центрĕ, нимĕçсен оборонин Прут шывĕ çинчи питех те вăйлă тĕреклетнĕ пунккĕ пулса тăнă, Венгрипе Румыни чиккисем патне пымалли вырăнсене хӳтĕлесе тăнă. ЧЕРНОВИЦЫ хулишĕн пынă çапăçусенче МОРГУНОВ полковникăн, КОШЕЛЕВ подполковникăн, ГУСАКОВСКИЙ подполковникăн, БОЙКО подполковникăн, КОЧУРА подполковникăн, ВИШНЕВСКИЙ полковникăн, КАМЕНСКИЙ полковникăн, ХАРЧЕВИН полковникăн, НЕЧИПОРЕНКО полковникăн, ФЕДУЛЬЕВ полковникăн, БОНДАРЕНКО подполковникăн, СУРОВОВ подполковникăн, ПОДДУБНЫЙ подполковникăн, ЩЕДРИН подполковникăн, ПИВИНЬ майорăн, СТУКАЛОВ майорăн, ГОРЯИНОВ подполковникăн, ГИЛЕНКОВ майорăн, РОМОВ подполковникăн, РОЯНОВ майорăн, ВАСИЛЬЕВ майорăн, ЯКОВЛЕВ майорăн, КНЯЗЕВ майорăн, ЧАБУНИН майорăн чаçĕсем чапа тухнă.

Мартăн 30-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Станислав облаçĕнчи район центрĕсене — ТЛУМАЧ хулине, ТЫСМЕНИЦА хулине, НАДВОРНАЯ хулине, ДЕЛЯТИН хулине, ОБЕРТИН хулине, ЗАБОЛОТОВ хулине, СНЯТЫН хулине, Черновицы облаçĕнчи район центрне — СТОРОЖИНЕЦ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ПЯДЬКИ, ЦЕНЕВА, ГАНЬКОВЦЫ, ЗАДУБРОВЦЫ, СТЕЦОВА, ИВАНКОВЦЫ, ЛУЖАНЫ, РАРАНЧЕ, ТОПОРОВЦЫ, НЕСТЕРОВЦЫ, ГАНОВКА, ПОДЛЕСНЫЙ МУКАРОВ, НЕФЕДОВЦЫ, КРУШАНОВКА, КИТАЙГОРОД ятлă пысăк ялсем.

МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Молдаван ССР-ĕн район центрне—ЛИПКАНЫ хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти темиçе пункта йышăннă.

БЕЛЬЦЫ хулинчен кăнтăртарахра тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра ПЕТРЕШТЫ, ТОБЕРЕШТЫ, ТЕШКУРЕНЬ, ДУМБРОВИЦА, СИНЕШТИ, ПАЛАНКА, ОНИШКАНЬ, МЫНДРЕШТИ, СТЫРЧА, ПЕПЕНИ, ОРДЕШЕЙ, РАСПОПЕНИ, ОЛИШКАНИ, ШОЛДАНЕШТИ, ПОРКАНЬ, ПОПАУЦЫ, ЧОРНА ятлă пысăк ялсем тата КОБЫЛЬЯЯ, ШОЛДАНЕШТИ, РЕЗИНА ятлă чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем вăйлă çапăçнă хыççăн Молдаван ССР-ĕн район центрне—РЫБНИЦА хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ.

ПЕРВОМАЙСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Одесса облаçĕнчи ЛЮБАШЕВКА район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ЛИПЕЦКОЕ, ТОЧИЛОВО, НОВО-ГЕОРГИЕВКА, ПЕТРОВКА, БОКОВО, СОФИЕВКА, ЯНОВКА, МАРЬЯНОВКА, ЛЯХОВА, ГУЛЯНИЦКОЕ, ТАРАСОВКА, НОВО-ПАВЛОВКА ятлă пысăк ялсем. Пирĕн çарсем ПЕРВОМАЙСК—СЛОБОДА — РЫБНИЦА — БЕЛЬЦЫ чугун çула тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă.

ВОСНЕСЕНСК хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, нимĕçсен каялла чакакан çарĕсене хăваласа пырса, Одесса облаçĕнчи МОСТОВОЕ тата ВЕСЕЛИНОВО район центрĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ВЕСЕЛАЯ, АЛЕКСЕЕВКА, КАРАТАЕВО, ВАСИЛЬЕВКА, СОФИЕВКА, 2-МĔШ НИКОЛАЕВКА, КАПИТАНКА, НОВО-ПОКРОВКА, МИХАЙЛОВКА, ВАТЭРЛЮ, ВЕСЕЛЫЙ КУТ ятлă пысăк ялсем тата МАРТЫНОВСКАЯ, МОСТОВОЕ, ВЕСЕЛИНОВО, АННОВКА ятлă чугун çул станцийĕсем.

НИКОЛАЕВ хули районĕнче пирĕн çарсем КĂНТĂР БУГ шывĕ тата БУГ ЛИМАНĔ урлă НИКОЛАЕВ хулинчен хĕвеланăçнерехре ăнăçлă каçнă та тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—Николаев облаçĕнчи район центрне—ВАРВАРОВКА хули тата ПЕТРОВСКОЕ, БОЛЬШАЯ КОРЕНИХА, НОВАЯ БОГДАНОВКА, ИЛЬИНСКОЕ, КРИНИЧКИ, ПЕТРОВКА, ВЛАДИМИРОВКА, БЕЛЯКОВИЧИ, НЕЧАЯННОЕ, БАЛАНОВ, ТУРЧАНОЕ ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Мартăн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 46 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 74 самолетне персе ӳкернĕ.

Пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Поляков тăван столицăра

Днепр патĕнчи çапăçусен паттăрĕ—пирĕн мухтавлă земляк ефрейтор Иван Поляков ĕнер, мартăн 31-мĕшĕнче, тăван республикăн столицине — Шупашкара килчĕ.

Пирĕн паттăр земляка—Совет Союзĕн Геройне Валентин Федорович Витвинские—мухтав!

1943 çул. Октябрь уйăхĕ пĕтсе пынă. Пирĕн çарсем тăшмана хăваласа пынă. Хăвала-хăвала çитсе нимĕç чаçĕсене пуçĕпех çапа-çапа аркатнă. Днепр леш енне каçса ӳкме ĕлкĕрнĕ гитлеровецсем унта кайма шутланă, совет çарĕсене Днепр урлă каçма памастпăр тесе ĕмĕтленнĕ. Пирĕн çарсем, темĕн пек йывăр пулсан та, Днепр урлă çине тăрсах каçма пикеннĕ. Чи малтан пĕчĕк ушкăнсем каçма тытăнассĕ. Çавăн пек хăюллă паттăрсен пĕр пĕчĕк ушкăнне пирĕн паттăр земляк гвардин аслă сержанчĕ, 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕн кавалерĕ Валентин Федорович Витвинский ертсе пынă. Çак ушкăн сĕм тĕттĕм каç Днепр шывĕн сылтăм енне каçса кайма май тупнă.

Тул çутăлса çитнĕ-çитменех, нимĕçсем çак паттăрсене асăрханă та вĕсене Днепр шывне каялла илсе ывăтма хăтланса, вĕсем çине урса кайнă усал кашкăрсем пек сиксе ӳкнĕ. Анчах та пирĕн паттăрсем малалла ярса пуснă çĕрĕн пĕр пусăмне те тăшмана каялла пама шутламан, вĕсем хайсем хыççăн каçакан чаçсем валли ку лаптăкран тĕреклĕ плацдарм тума шутланă, тăшманпа вăйлă арăслансем пек хаяррăн çапăçнă. Витвинский юлташăн ушкăнĕ хăйсенчен йышлă тăшманăн умлă-хыçлă темиçе атакине сирсе янă. Витвинский хăй гитлеровецсен ултă танкне персе çĕмĕрет. Нимĕçсем, пĕчĕк ушкăнăн вут-çулăмне тӳсеймесĕр, каялла чакаççĕ. Çапла майпа малти пĕчĕк ушкăнсем Днепр шывĕн сылтăм енче çирĕп плацдарм тăвассине пуçласа яраççĕ.

Правительство Валентин Федорович Витвинский юлташăн ĕçĕсене питĕ пысăка хурса хакланă, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943 çулхи ноябрĕн 13-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх ăна Днепр шывĕ урлă паттăррăн каçса çапăçнăшăн Ленин орденĕпе «Ылттăн Çăлтăр» медаль парса, Совет Союз Геройĕн ятне панă.

В. Ф. Витвинский юлташ Улатăр хулинче çуралса ӳснĕ. Унăн амăшĕпе йăмăкĕсем халĕ те Улатăрта пурăнаççĕ.

Унăн амăшĕ — Екатерина Александровна Резчикова, «Красный восход» артельти çĕвçĕ, çак кунсенче пĕр гвардейски часть командованийĕнчен çыру илнĕ. Çырура çапла çырнă: «Халĕ ĕнтĕ тăван Днепр пирĕн хыçра сутăлса выртать. Сирĕн Валентин, халĕ те яланхи пекех, малалла тапăнса пыракан паттăрсен малти ретĕнче çапăçать. Вăл сывă, унăн вăй-халĕ çирĕп. Этемлĕхĕн ылханлă тăшманне тĕппипех çапса аркатассишĕн вăл яланах хаяррăн çапăçать».

Тăван халăх хăйĕн паттăр ывăлĕпе тивĕçлипе мухтанать.

Информациллĕ пĕлтерӳ

МАРТĂН 31-МĔШĔНЧЕ ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔН XVIII-МĔШ ПЛЕНУМĔ ПУЛСА ИРТРĔ. ПЛЕНУМ ВКП(б) ОБКОМĔН СЕКРЕТАРĔН И. М. ЧАРЫКОВ ЮЛТАШĂН ÇУРАКИНЕ ИРТТЕРЕССИ ТАТА 1944 ÇУЛТА ВĂЙЛĂ ТЫРПУЛ ТУСА ИЛЕС ĔÇРЕ РЕСПУБЛИКĂРИ ПАРТИ ОРГАНИЗАЦИЙĔ УМĔНЧЕ ТĂРАКАН ЗАДАЧĂСЕМ ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОКЛАДНЕ СУТСĔЯВРĔ.

ПЛЕНУМ ÇУРАКИНЕ АНĂÇЛАН ИРТТЕРМЕ ХАТĔРЛЕНСЕ ÇИТЕС ТĔЛĔШПЕ ПРАКТИКАЛĂХ МЕРОПРИЯТИСЕМ ПАЛĂРТРĔ.

ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔ.

Çуракине иртересси тата 1943 çулта вăйлă тырпул туса илес ĕçре республикăри парти организацийĕ умĕнче тăракан задачăсем

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. М. ЧАРЫКОВ юлташ Обкомăн XVIII пленумĕнче тунă докладран

Юлташсем! Паттăр Хĕрлĕ Çар тăшмана умлăн-хыçлăнах, аркатса тăкмалла ыра-пыра çапать. Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем государство чиккине тухрĕç ĕнтĕ. Хамăрăн пĕтĕм совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатса çитерес сехет те инçе мар. Фронтовиксен паттăр ĕçĕсем колхоз хресченĕсене, пĕтĕм совет халăхĕсене хавхалантарнă пекех, гитлерла вăрă-хурахсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкассишĕн хастарлăн ĕçлеме хавхалантараççĕ. Колхоз хресченĕсем фронтпа çĕршыва апат-çимĕçсем, промышленноçа чĕртаварсем çителĕклĕ парса тăрса, наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленире колхозсемпе совхозсем иртнĕ çулта вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисене пăхмасăр тата хăшпĕр облаçсемпе крайсенче, республикăсенче çанталăк начар тăнă пулин те ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнине тата ытлашши пысăк чăрмавсемĕсĕрех Хĕрлĕ Çарпа халăха апат-çимĕç, промышленноçа чĕртаварсем парса тăнине палăртнă. Чăваш республикинчи колхозсем 1943 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене иртнĕ çулсенчен лайăхрах та организованнăйрах иртерчĕç, вĕсен ĕçне партипе правительство пысăка хурса хакларĕç. СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, облаçсемпе крайсен тата республикăсен ялхуçалăхĕнчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республикăна тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш преми памалла тунă. Çавăн пекех пирĕн республика вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртнă.

Колхозсем чылай çитĕнӳсем тунă пулин те, эпир çĕр ĕçĕнче пĕтĕм майсемпе усă курнă теме çук-ха. Социализмлă ялхуçалăхĕнче пысăк резервсем пур. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсем çапланса ларма нимĕнле ирĕк те памаççĕ. Çĕршывпа фронт ялхуçалăх умне пысăк ыйтусем лартаççĕ. Тырпул тухăçлăхне малалла пур майсемпе те ӳстерсе пырасси тата тĕштырă, ялхуçалăх продукчĕсем ытларах пухса илесси республикăри парторганизацин боевой задачи пулса тăрать.

Пирĕн республика, тăванла Мари тата Мордва республикисемпе социализмлă ăмăртăва тухса, 1944 çулта гектартан пĕрчĕллĕ тырăсем—12,5 центнер, çĕрулми—105 центнер туса илме обязательство илчĕ. Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртесси, чи малтанах, çуракине тĕплĕн хатĕрленнинчен тата ăна вăхăтра та лайăх пахалăхпа иртернинчен килет.

Лайăх пахалăхлă вăрлăхсем хатĕрлер

Тырă ăнса пуласси, чи малтанах, вăрлăхран килет. Начар вăрлăхран тырпул лайăх пуласси ан кĕт,—тенĕ ваттисем. Çураки валли лайăх пахалăхлă вăрлăхсем хатĕрлемелле.

ВКП(б) Обкомĕн XVII-мĕш пленумĕ парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсене, çĕрĕç органĕсене вăрлăх фончĕсене хăвăрттăн хывса çитерме татăклă мерăсем йышăнма тата вĕсене çураки валли хатĕрлеме хушса хăварчĕ. Вăрлăхсене лабораторисенче пĕррремĕш хут январĕн 20-мĕшĕ тĕлне, иккĕмĕш хут—уйхир ĕçĕсем пуçланиччен вунă кун маларах тĕрĕслесе тухма хушнă. Пленум, кăçал вăрлăхсем кивçен парас çукки çинчен асăрхаттарса, ВКП(б) райком секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсене пĕтĕм вăрлăха вырăнтах тупас тĕлĕшпе çийĕнчех мерăсем йышăнма—колхозсемпе колхозниксенчен кивçен илме хушса хăварчĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн кăтартăвĕсемпе килĕшӳллĕн, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ вăрлăхсене çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе ятарласа постановлени кăларчĕç. Анчах та ВКП(б) райкомĕсен хăшпĕр секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсем çав решенисене пурнăçа кĕртесси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхман, çапла вара, çураки валли вăрлăхсем хывас тата вĕсене акма хатĕрлес ĕçсене пĕтĕмпех туса çитермен. Республикăри колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсен вăрлăхĕсене хывмалли плана 92,4 процент, çĕрулми вăрлăхĕ хывмалли плана 83,9 процент, йĕтĕн вăрлăхĕ хывмалли плана 58,3 процент, кантăр вăрри енĕпе 91,3 процент, вика вăрлăхĕ енĕпе 79,9 процент, клевер вăрлăхĕ енĕпе 36,5 процент çеç тултарнă. Канаш районĕн пĕрчĕллĕ культурăсен вăрлăхĕсем 89,4 процент, çĕрулми вăрлăхĕ 49 процент, кантăрвăрри 88 процент, вика вăрлăхĕ 47,5 процент çеç пур. Ишлей районĕнчи колхозсен пĕрчĕллĕ культурăсен вăрлăхĕсем 90,5 процент çеç пур. Хывнă вăрлăхсен хисепĕнчен 70 проценчĕ тасалăх енчен кондицие ларман тата 6,5 проценчĕ шăтас енчен кондицие ларман. Советски районра хывнă вăрлăхсенчен лабораторисенче çуррине яхăн та тĕрĕслемен-ха. Вăрлăхсен чылай пайĕ кондицие ларман пулин те, çак районăн руководителĕсем вăрлăх пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмаççĕ-ха. Вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе Элĕк районĕнче те ĕçсем çапла лах. Начар шăтакан тырăсемпе госсортфонд тата Заготзерно склачĕсенчен лайăх пахалăхлă вăрлăхсемпе улăштарса илесси çителĕксĕр пулса пырать. Шупашкар районĕнчи колхозник Егоров юлташ хăйсен колхозне 140 пăт кивçен вăрлăх пачĕ, çак лайăх пуçарăва колхозниксем хушшинче кирлĕ пек сармаççĕ-ха. Вăрлăхсене колхозсем хушшинче улăштарассине те тивĕçлипе йĕркелесе яман.

Республика Совнаркомĕпе парти Обкомĕ чылай районсене пулăшу йĕркипе вăрлăх уйăрса парасси çинчен постановлени йышăнчĕç. ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсенчен тата райсовет исполкомĕсен председателĕсенчен хăшпĕрисем çав решенине пурнăçа кĕртмесен те юрать тесе шутлаççĕ пулас. Çапла, сăмахран, ВКП(б) Советски райкомĕн секретарĕ Никитин юлташ çав решенине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕр уйăх хушшинче нимĕнле мерăсем те йышăнман. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Никитин юлташа ятласа хăварчĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çак сывăх вăхăтрах колхозсене пулăшма уйăрса хунă вăрлăха Заготзерно склачĕсене турттарса тухмалла. Çав вăрлăхсене илме тивĕçлĕ колхозсем вĕсене çул пăсăличчен турттарса пĕтерме пултарччăр.

Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çураки пуçланиччен кашни колхоза пур культурăсем тăрăх та лайăх пахалăхлă вăрлăхсем çителĕклĕ таранах тупса памалла тăвас пулать. Çавăнпа пĕрлех вăрлăхсене мĕнле пăхса усранине тата вĕсем мĕнле пахалăхлă пулнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла.

1943 çулта пирĕн республикăри чылай колхозсенче тырăсен пĕр пайĕ вутпуççиллĕ пулнă. Çакă вăл тырпул тухăçлăхне чакарнă. Тулă, урпа, сĕлĕ, вир тата йĕтĕн вăрлăхĕсене пĕтĕмпех кирлĕ имçамсемпе чӳхесе акмалла, çак ĕç валли аппаратсем, инструментсем тата химикатсем вăхăтра кӳрсе килмелле. Çураки пуçланиччен 10 кун малтан колхозсенчи вăрлăхсен пахалăхне, вĕсем мĕнле шăтассине, тасалăхне тĕрĕслесе тухмалла. Вăйлă тырпул туса илме кирлĕ вăрлăхсене çак сывăх кунсенчех хатĕрлесе çитерессишĕн пĕтĕм вăйпа çине тăрса тимлĕн ĕçлемелле.

МТС-сен ĕçĕсем çинчен

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленире 1943 çулта машинно-тракторнăй станцисем çителĕксĕр ĕçленине палăртнă. Çавна пула тракторсемпе тумалли ĕçсен планне тултараймасан, машинăсемпе сахалтарах ĕçленĕ, уйхир ĕçĕсене вăрăма янă, çĕртме тата кĕрхи çĕртме тумалли плана, тырпулсене пăхса ӳстерес енĕпе тумалли ĕçсене пурнăça кĕртсе çитереймен. Совет, парти тата çĕрĕç органĕсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене вăхăтра тата лайăх юсамала тăвайман, союзлă тата вырăнти промышленность предприятийĕсенче запаслă пайсем çителĕклĕ туса кăлармалла тăвайман. Вĕсем трактористсемпе комбайнерсен тата механиксен кадрĕсене суйласа илесси тата хатĕрлесси çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхман, вĕсене ĕçре кирлĕ пулăшу паман. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çакăн пек хаклани пирĕн республикăна та тивет.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илмен. Вĕсем машинăсемпе тракторсен паркне кăсалхи çураки валли вăхăтра тата лайăх хатĕрлесе хурас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман. Мартăн 20-мĕшĕ тĕлне тракторсем юсамалли плана 88,1 процент çеç тултарнă. Тракторсене юсамалли плана пурĕ 11 МТС пурнăçа кĕртнĕ. Тракторсене юсамалли плана чи малтан, январĕн 5-мĕшĕ тĕлне, Красноармейски МТС тултарчĕ, унтан вара Комсомольски, Шăхасан, Йĕпреç, Елчĕк тата ытти МТС-сем те тултарчĕç.

Малта пыракан МТС-сен руководителĕсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене шута илсе, запаслă пайсем тăвас тата юсас тĕлĕшпе вăхăтра ĕçлеме тытăнчĕç, шалти ресурссене анлăн мобилизацилерĕç. Çапла, Вăрнар МТС-ĕнче тракторсене юсас ĕç НАТИ тракторсем валли поршеньсем тата насуссем валли шестерясем пулман пирки чарăнса тăнă. МТС-ăн старши механикĕ Ремизов юлташ пуçарнипе çав поршеньсемпе шестернясене хăйсен мастерскойĕнчех тума тытăннă. Çакăн хыççăн вара МТС йывăрлăхран тухнă.

Малта пыракан МТС-сенче роликлă подшипниксем вырăнне бронзăран тата чугунран тунă подшипниксем (шăвакан подшипниксем) лартаççĕ.

Çакăнпа пĕрлех пирĕн тракторсене юсамалли графике пурнăça кĕртсе пыман МТС-сем, тракторсене юсас ĕçе правительство кăтартса панă срок тĕлне вĕçлемен МТС-сем те пур-ха. Пăрачкав МТС-ĕ (директорĕ Салмин юлташ) тракторсем юсамалли плана 52 процент, Улатăр МТС-ĕ (директорĕ Учимихин) 65 процент, Кубакино МТС-ĕ (директорĕ Презоров) 76 процент, Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ (директорĕ Ширкатдинов юлташ) 78 процент çеç тултарнă.

Асăннă МТС-сенче тракторсем юсакан рабочисем хушшинче ĕç дисциплини сӳрĕк, производствăна япах йĕркеленĕ. Тӳрех калас пулать, тракторсене юсас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе парти райкомĕсем пурте мар мерăсем йышăннă, палăрнă çитменлĕхсене пĕтерессишĕн, рабочисем валли лайăх условисем туса парассишĕн пурте мар тивĕçлипе кĕрешеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ темиçе хут та асăрхаттарнă пулин те, чылай МТС-сенче тракторсемпе ялхуçалăх машинисене лайăх юсасси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Çапла, Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнче юсанă 12 трактортан 9 тракторĕн çитменлĕхсем нумай пулнă. Улатăр МТС-ĕнче 46-мĕш номерлĕ гусеницăлă трактора ремонтран гусеницăсăр кăларнă, урапалă трактора юсавлă мар радиаторпа кăларнă. Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕнче тракторсене государство комиссийĕ йышăннă чухне 4 трактора ĕçлеттерме пултарайман.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăçал çакăн пек йĕрке тунă: пур машинăсене те райсовет исполкомĕн председателĕ е парти райкомĕн секретарĕ ертсе пыракан государство комиссийĕ йышăнмалла. Хĕрлĕ Чутай тата Элĕк райкомĕсем тракторсене йышăнас ĕç çине тимлĕн пăхман, вĕсем комиссин председателĕсем пулма çав ĕçе тĕплĕн пĕлмен çынсене лартнă. Хăшпĕр районсенчи комиссисем тракторсене юсанă хыççăнах йышăнмаççĕ, нумай тракторсем пуханса тин йышăнаççĕ, вара вĕсене мĕнле юсанине лайăх тĕрĕслемесĕрех йышăнаççĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен тракторсене тата вĕсене кăкарса ĕçлемелли инвентаре çураки пуçланиччен пĕтĕмпех юсаса çитермелле. Государство комиссийĕсен кашни трактора, плуга, сеялкăна, культиватора тата ытти машинăсене те тĕплĕн тĕрĕслесе йышăнмалла. Çураки вăхăтĕнче тракторсем пĕр кăлтăксăр ĕçлеме пултарччăр. Государство комиссийĕн председателĕ машинăсене лайăх юсассишĕн МТС директорĕсемпе пĕртанах ответлă пулса тăрать.

Республикăри чылай МТС-сенче (Шăмăршă, Чкаловски, Пăрачкав, Кувакино, Улатăр, Сĕмĕрле, Красноармейски, Сĕнтĕр МТС-ĕсенче) горючи кӳрсе килес тĕлĕшпе ĕç начар пырать. Газогенераторнăй тракторсем валли топливо хатĕрлес ĕç те начар пырать. Çапла, Шăмăршă МТС-не çураки иртерме 800 кубометр чурка кирлĕ, ку таранччен вăл 180 кубометр çеç хатĕрленĕ. Сĕмĕрле МТС-не 400 кубометр кирлĕ, вăл 140 кубометр çеç хатĕрленĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ МТС-сенче тата совхозсенче çураки валли горючин тата сĕрмелли

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

И. М. Чарыков юлташ доклачĕн вĕçĕ

япаласен запасĕсене тăвасси пирки ятарласа решени йышăнчĕç, вĕсене хăçан турттарса тухмаллине кăтартса пачĕç. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен тата МТС директорĕсен горючипе сĕрмелли япаласене вăхăтра кӳрсе килес тата газогенераторнăй тракторсем валли чуркăсем хатĕрлес тĕлĕшпе пур мерăсене те йышăнмалла.

Кашни МТС-рах большевикла йĕркелĕх тумалла. МТС-сен ĕçĕнче государствăн ытти предприятийĕсенчи пекех хуçасăрлăхпа сӳрĕклĕх пулмалла мар. Хăшпĕр МТС-сен директорĕсем çирĕп план тăрăх ĕçлемеллине тата ĕçе тĕрĕс организацилессишĕн тăрăшманнине текех килĕшме çук. Тракторнăй бригадăсене уйхире ĕçлеме тухсанах техникăпа организацилĕх тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ пулăшу памалла.

Тракторнăй бригадăсене халех çынсем тупса парса çитермелле, старши трактористсем пулма опытлăрах та ĕçе лайăх пĕлекен çынсене лартмалла. Сураки ĕçĕсем пуçланиччен икĕ эрнерен кая юлмасăр тракторнăй бригадăсене кашнинех заданисем çирĕплетсе памалла. Вăл заданисенче мĕнле ĕçе хăш вăхăтра пурнăçа кĕртмеллине тата мĕн тарăнăш сухаламаллине кăтартмалла. Çамрăк трактористсене бригадир пĕрмаях пулăшса тăма кирлине шута илсе, бригадăсенчи трактор паркĕсене пĕр-пĕринчен инçетре мар вырнаçтармалла, бригадир трактористсене вăхăтра пулăшма пултартăр.

МТС-сен директорĕсемпе механикĕсем сураки ĕçĕсем пуçланиччен тракторсене техника тĕлĕшĕнчен мĕнле пăхса усрамаллине палăртса графиксем тумалла. Çав графиксене кашни бригадăрах çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас пулать. Тракторсен вăйĕпе туллин усă курмалла. Пирĕн МТС-сенче тракторсем пĕр плуг кăна кăкарса, сӳре кăкармасăр ĕçленине е тата пĕр сеялкăпа кăна акнине нумай чухне курма пулать. Çавна пула вара тракторсен вăйĕн çуррипе кăна усă кураççĕ.

Иртнĕ çулта уйрăм МТС-сенче агротехникăна пăснисем—ăшăх тата шăйрăк хăварса сухаланисем — пулнă. Ун пек йĕркесĕрлĕхсем кăçал пулмалла мар. Çурхи сухана 18 сантиметр тарăнăш сухалас пулать тата ăна çийĕнчех сӳрелемелле.

Парти райкомĕсемпе МТС-сенчи парторганизацисен тата комсомол организацийĕсен трактористсемпе МТС работникĕсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сарса пымалла, вĕсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленине тĕплĕн ăнлантарса памалла, суракине вăхăтра тата лайăх пахалăхпа ирттерессишĕн, горючисене перекетлессишĕн социализмлă ăмăрту организацилемелле. Трактористсене ĕçлеме, пурăнма лайăх условисем туса памалла.

Кашни МТС-н ĕçне миçе гектар сухалани тăрăх кăна мар, çавăн пекех тата мĕнле пахалăхпа ĕçлени тăрăх та хакламалла. Государство заданине хăй ĕçленĕ колхозсенчи çĕр çинче вăйлă тырпул туса илме пулăшакан МТС çеç чыслăн пурнăçа кĕртĕ.

Лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕ çинчен

Суракине ирттерес ĕçре лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕ: плугсем, сеялкăсем, культиваторсем, сӳресем пысăк выран йышăнса тăраççĕ. Республикăри колхозсем кăçалхи мартăн 20-мĕшĕ тĕлне плугсене 72 процент, сеялкăсене 91 процент çеç юсанă. Хăшпĕр районсем лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене ку таранччен те юсаса пĕтермен. Çапла, Канаш районĕнчи колхозсенче плугсене 51 процент çеç юсанă. Унта сеялкăсемпе культиваторсене тата сӳресене те юсаса пĕтермен. Улатăр, Ишлей, Куславкка районĕсенчи колхозсенче те плугсемпе сеялкăсене юсаса пĕтереймен-ха.

Сеялкăсене тата ытти машинăсене чылай çĕрте начар пахалăхпа юсанă.

Парти райкомĕсен секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсен лашапа ĕçлемелли машинăсене лайăх пахалăхпа тата сывă вăхăтра юсаса пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла. Колхозсенче машинăсем валли сĕрмелли япаласем, постромкăсем, лаша кӳлмелли хатĕрсем т. ыт. те халех хатĕрлемелле. Ялхуçалăх машинисене малтанах сухаçăсемпе акакансем çумне çирĕплетсе хумалла. Вĕсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ машинăсене хăйсемех тепĕр хут тĕрĕслесе тухма пултарччăр.

Лашасемшĕн ытларах тăрăшмалла

Республика çĕртме тумалли плана 65,5 процент кăна тултарнине пула, çитес суракинче лашасемпе ытларах ĕçлемелле пулать. Анчах та чылай районсенчи руководительсем çавна шута илмесçĕ-ха, вĕсем лашасене уйхир ĕçĕсене тума хатĕрлес тĕлĕшпе тивĕçлипе кĕрешме тытăнман. Уйрăм колхозсен руководителĕсем лашасене пăхасси çине ответсăр пăхнине пула, хăшпĕр районсенче юлашки икĕ уйăх хушшинче кăна лашасен хисепĕ чылай чакнă. Вăйсăр лашасем Канаш, Тăвай, Пăрачкав, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсенче нумай.

Çак сывăх кунсенчех лашасен сывлăхне тĕрĕслесе тухмалла, чирлĕ лашасене сыватма тытăнмалла, начар лашасене канма тăратмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ чĕрĕ туртăм вăйĕпе колхозсен уйхирĕсенчи ĕçсенче туллин усă курмалла тăвас шутпа выранти организацисене туртăм вăйне Оборонăн Государственный Комитечĕ ирĕк памасăр кирек мĕнле ĕçе те мобилизацилеме чарнă. Сураки пуçланиччен пĕр уйăх малтан пур колхозсенче те лашасене ĕçрен хăтармалла. Колхозсемпе совхозсен чĕрĕ туртăм вăйĕпе уйхир ĕçĕсенче туллин усă курмалла, лашасемпе хуçалăхри ĕçсенче усă курассине чакармалла, çурхи ĕçсем валли кирлĕ таран утă, концентратсемпе ытти тĕрлĕ апат-çимĕçсем уйăрса хумалла. Уйхир ĕçĕсем пуçланиччен виçĕ эрне малтанах лашасене вăйлă апат çине куçарма тăратмалла.

Пур колхозсенче те выльăхсене апата лайăх хатĕрлесе (вакласа, пăспа пĕçерсе т. ыт.) çитерес ĕçе организацилемелле, выльăх апачĕ çитменсен, колхозниксемпе колхозсенчен кивçен е сутăн илмелле. Апатсене мĕнле расходланине çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмалла.

Кӳлмелли хатĕрсене тата транспорт инвентарьне халех юсаса йĕркелемелле, кашни лаша, кашни вăкăр валли кӳлмелли хатĕрсем çителĕклĕ пулччăр.

Кăçал лашасемпе тумалли ĕçсен калăпăшĕ ӳсме пултарнине, уйрăмах майракаллă шултăра выльăхсемпе усă курасси çине хытă çавăрăнса пăхмалла.

Пуриншĕн те паллă, Шăмăршă, Чкаловски, Пăрачкав, Кувакино, Улатăр районĕсенче лашасем пирки ыйту уйрăмах çивĕччĕн тăрать. Асăннă районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсем туртăм вăйне колхозсенчи майракаллă шултăра выльăхсене ĕçлеме вĕрентнĕ шутпа çеç мар, уйрăм колхозниксен выльăхĕсене ĕçе вĕрентнине те ӳстерес пулать.

Тырпул тухăçлăхне ӳстермелли мерăсем çинчен

Вăрçă условийĕсенче тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешесси—вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи кирлĕ задача пулса тăрать. Çак задачăна ăнăçлăн татса парас тесен, агротехника правилисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртмелле. Уйхир ĕçĕсен пахалăхĕн ыйтăвĕ Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва апат-çимĕçсем тăрантасси çинчен тăракан ыйту пулса тăчĕ.

Агротехникăна тивĕçлипе хакламанни çĕр ĕçне тĕрĕс туса пымалли йĕркесене пăсасси патне илсе пырать. Нумай колхозсенче нимсăлтавсăрах пусуçаврăнăшне пăсаççĕ, уйсене удобренисем сахал кăлараççĕ, нумай çул хушши ӳсекен курăксене акма пăрахнă.

1944 çулхи суракине ирттернĕ чухне уйрăмах тырпулсене кĕске срокра акса хăварасси, сумкурăксене пĕтерести, тăпрара нӳрлĕх тытса хăварасси тата агротехникăн пур мероприятийĕсене те пурнăçа кĕртесси çине хытă çавăрăнса пăхмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ республикăсемпе крайсенчи, облаçсемпе районсенчи советпа парти тата çĕрĕç органĕсене сураки пуçланиччен колхозсенче агрономсемпе тата опытлă колхозниксемпе пĕрле агротехникăллă мероприятисем туса хатĕрлеме, вĕсене сураки вăхăтĕнче пурнăçа кĕртме хушса хăварчĕç.

Çав мероприятисене колхоз правленийĕсен ларăвĕсенче сӳтсе-явса çирĕплетмелле, кашни бригада, звено тата кашни колхозник патне çитермелле. Вĕсем сураки пуçланиччен хăш участокра мĕнле ĕçсем туса ирттермелле çинчен пĕлсе тăччăр. Çав ĕçсене пур бригадăсемпе звеносем те пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле.

Пусуçаврăнăшне пăснипе хирĕç татăклăн кĕрешӳ пуçармалла. Уйхирсенче мĕнпур культурăсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла. Нумай çул хушши ӳсекен курăксене акса тăвас ĕçе вăйлатса, йĕркелесе ямалла.

Уйхирсене улăхран, сумкурăк тымарĕсенчен, хăмăлсенчен тасатмалла. Çурхунехи вăхăтра тăпрара нӳрлĕх ытларах сыхласа хăварас шутпа тата сумкурăксене пĕтерес шутпа, çĕре лайăх ĕçлесе çемçетмелле.

Сеялкăсемпе акас ĕçе хакламаннине тата вăрлăх мĕн чухлĕ акмалли нормăна пăснипе хирĕç татăклăн кĕрешмелле. Уйхир ĕçĕсене мĕнле пахалăхпа тунине кулленех тĕрĕслесе тăмалла.

Бригадирсемпе колхоз председателĕсен, ĕç пахалăхне тĕрĕслекен инспекторсен сураки вăхăтĕнче тăтăшах уйра пулса агрономсăр çирĕплетсе панă агротехника правилисене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле. Ĕç тухăçлăхне ӳстерес тата ĕç пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçе уйрăмăн туни пысăк выран йышăнса тăрать, ăна пур колхозсенче те ĕçе кĕртмелле. Уйхир бригадирĕ кашни кулленех ĕç пĕтнĕ хыççăн колхозник мĕн чухлĕ тата мĕнле пахалăхпа ĕçленине уйрăмăн шута илме тивĕçлĕ. Ĕçкунĕсене çав хисеп тăрăх шутласа памалла. Ĕç пĕтнĕ хыççăн колхоз председателĕн уйхирти кашни участока (унăн виçине, туна ĕçĕн пахалăхне тĕрĕслесе) йышăнмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсене агрономсемпе туна агротехникăллă мероприятисене, çав мероприятисене туна агроном е тата райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ ирĕк памасăр пăрахăçа кăларма е улăштарма чарнă. Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен асăннă мероприятисене мĕнле пурнăçа кĕртнине кулленех тĕрĕслесе пымалла, вĕсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать. Партипе совет организацийĕсем колхозсенче агротехникăна пăсакансене тӳссе тăрайман тата брак тăвассине сивлекен туйăмсене хытă сармалла. Кашни колхозникпе колхозница çĕре сухаламалли, акмалли тата ытти ĕçсен йĕркисене пăсни пысăк сиен кӳме пултарни çинчен пĕлсе тăтăр.

Çитес сураки малта тăракан агротехникăпа, пур колхозсемпе совхозсенче те уйхир ĕçĕсене лайăх пахалăхпа ирттермелли сураки пулса тăтăр.

Выранти удобренисемпе анлăн усă курар

Пуриншĕн те паллă, тăпрана çемĕçтерни тырпул тухăçлăхне вăйлăн ӳстермелли май пулса тăрать.

Вăрçă вăхăтĕнчи условисенче эпир минераллă удобренисене ăçтан та пулин илсе килесси çине шанса тăма пултараймастпăр, пирĕн выранти мĕнпур удобренисемпе туллин усă курмалла. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ 1943 çулхи кĕркунне кашни район тăрăх мĕн чухлĕ тислĕк турттармалли, мĕн чухлĕ торф кăлармалли тата кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли плана çирĕплетсе панă. Çавăнпа пĕрлех хĕллехи вăхăтра удобренисем мĕн чухлĕ турттармаллине те çирĕплетсе панăччĕ. Мартăн 20-мĕшĕ тĕлне республикăра 3.018.211 лав тислĕк уя кăларнă. Ку плана 77,5 процент тултарни пулать. Торф 14.429 лав хатĕрлесе турттарнă, ку плана 2,8 процент тултарнине пĕлтерет. Кĕл 66.946 центнер пухса плана 78 процент пурнăçа кĕртнĕ. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ вара 48.194 центнер пухнă, çакă вăл плана 80 процент чухлĕ тултарни пулать.

Выранти удобренисем хатĕрлесе турттармалли плана Вăрнар, Калинино, Сĕнтĕр, Шăхасан районĕсем çеç ирттерсе тултарнă. Хăшпĕр райсовет исполкомĕсемпе райком секретарĕсем выранти удобренисене тивĕçлипе хакламан, çавăнпа ĕнтĕ вĕсене хатĕрлесе турттарассине те кирлĕ пек организацилемен. Çав районсен хисепне Йĕпреç, Советски, Комсомольски, Первомайски, Чкаловски тата ытти хăшпĕр районсем кĕреççĕ.

Партипе комсомол организацийĕсен тислĕкпе, кĕлпе, торфпа тата ытти выранти удобренисемпе туллин усă курас тĕлĕшпе, уйрăмах техникăллă культурăсем, çĕрулми, пахча-çимĕçсем акнă çĕрте усă курас тĕлĕшпе, татăклă мерăсем йышăнмалла. Уйхире турттарнă тислĕке пĕтĕмпех тĕрĕс купаласа хурса ăна çурхи тырăсем акмалли çĕр çине сарса тухма хатĕрлемелле.

Кашни колхоза—вăрлăх участокĕ

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вăрлăх участокĕсен виçине акакан пĕтĕм çĕр лаптăкĕн хисепĕнчен кĕрхи тулăпа ыраш валли — 12 процент, сĕлĕпе урпа валли — 13 процент, çурхи тулăпа хуратул валли — 15 процент, вир валли — 7 процент, пăрса йышши культурăсем валли — 15 процент чухлĕ çирĕплетсе панă.

Колхозсенчи вăрлăх участокĕсене тырăсем акас умĕн лайăх хатĕрлесе çемçетнĕ çĕр çинче тумалла, çав участоксем тавра чикĕсем тумалла. Вăрлăх участокĕсене тислĕк тата ытти выранти удобренисем тăкмалла, тăпрана лайăх çемĕçтерсе паха йышши вăрлăхсем акса хăвармалла тата вĕсене агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх пăхса çитĕнтермелле. Колхозсенчи вăрлăх участокĕсене акса хăварма правительство 1944 çулхи сураки валли пирĕн республикăна çурхи культурăсен паха йышши вăрлăхĕсене 9.100 центнер уйăрса панă. Çав вăрлăха халех госсортфонд склачĕсенчен турттарса тухмалла та вĕсемпе пĕтĕмпех тĕрĕс усă курмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх, районсенчи çĕрĕç пайĕсен штатне вăрлăх туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен агроном хушса панă, ун çине колхозсенчи вăрлăх участокĕсене мĕнле тытса тăнине тĕрĕслесе тăрас ответлăха хунă. Çак сывăх кунсенчех вăрлăх туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен агрономсене выранĕсене лартас ĕçе пуса çитермелле.

Техникăллă культурăсем çине ытларах çавăрăнса пăхар

Пирĕн республикăра техникăллă культурăсем: кок-сагыз, табак, йĕтĕн тата кантăр акса тăвасси оборона тĕлĕшĕнчен пысăк выран йышăнса тăраççĕ. Апла пулин те нумай районсен тата колхозсен руководителĕсем çавна ăнланса илмен-ха, техникăллă культурăсем акса тăвасси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Пирĕн кок-сагыз, табак, йĕтĕн тата кантăр тухăçлăхĕ пĕчĕк-ха.

1944 çулта техникăллă культурăсем акса тăвас ĕçе татăклăнах лайăхлатас пулать. Техникăллă культурăсем акакан кашни колхозра ялан ĕçлекен производствăллă звеносем тумалла, вĕсем çумне çĕр участокĕсем çирĕплетсе памалла.

Производствăллă звеносене техникăллă культурăсем акса тума çĕре çемçетнĕ çĕрте кирлĕ чухлĕ инвентарь, туртăм вăйĕ уйăрса памалла, агротехникăллă мероприятисене пурнăçа кĕртме плансем тумалла тата вĕсене пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Техникăллă культурăсем акмалли уйрăм участоксене колхозниксем çумне çирĕплетсе парса звеносенчи ответсăрлăха тĕппипех пĕтерес пулать. Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра махорка акса тăвакан звенора кашни колхозник çумне пĕр гектар çĕр çирĕплетсе панă. Вĕсем тухăçлă табак туса илнĕ. Ĕçе çавăн пек организацилессине пур колхозсене те сармалла.

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çинчен

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пирĕн республикăри колхозсем çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне 30,8 процент тата пахча-çимĕçсем лартмалли çĕр лаптăкне 21 процент ӳстерчĕç. Чылай колхозсемпе районсем çак культурăсен тухăçлăхне те чылаях ӳстерчĕç. Анчах та, республикипе илсен, çĕрулми тата пахча-çимĕçсем лартса тăвасси çителĕксĕр пулса пырать. Партипе совет тата çĕрĕç органĕсен умĕнче асăннă культурăсен тухăçлăхне татăклăнах ӳстерес задача тăрать. Ответсăрлăха пĕтерме çĕрулми лартнă тата пахча-çимĕçсем акнă çĕр лаптăкĕсене ялан ĕçлекен звеносем çумне, уйрăм участоксене колхозниксемпе колхозницăсем çумне çирĕплетсе памалла.

Çĕрулми тухăçлăхне ӳстермелли лайăх майсенчен пĕри вăл — çĕрулми вăрлăхĕн сортне тĕрĕс суйласа илни пулать. Пирĕн республика условийĕсенче «лорх» текен çĕрулми тухăçлăн ӳсме пултарать. Колхозсен вăрлăх участокĕсене «лорх» йышши çĕрулми лартса хăвармалла. «Лорх» текен çĕрулми сортне анлăн ĕрчетме çĕрулмине каса-каса лартмалла. Çĕрулми тăррине ытларах хатĕрлессишĕн те çине тăрса ĕçлемелле.

Районсен руководителĕсем колхозсене çĕрулми вăрлăхĕ сураки планне тултарма кирлĕ таранах тупса памалла тума мĕнпур майсене йышăнмалла, çĕрулми вăрлăхне колхозниксенчен тата колхозсенчен сутăн илессине организацилемелле. 1944 çулта кашни колхозрах пахча-çимĕç вăрлăхĕсем туса илмелле.

Партипе правительство рабочисемпе служащисен коллективĕсен тата уйрăм çыннисен пахчисене аталантарассишĕн кулленех тимлĕн тăрăшаççĕ. Çакă вăл апат-çимĕç ресурсĕсене вăйлатас тĕлĕшпе питех те пысăк выранта тăрать. Партин хулисенчи тата районсенчи комитечĕсен, профсоюз организацийĕсен çĕр участокĕсене вăхăтра уйăрса парассишĕн, рабочисемпе служащисен коллективĕсене пахча-çимĕçсем акса тума вăрлăхсем тупса парассишĕн тăрăшас пулать.

Сад-пахчисене çĕнĕрен ĕрчетер

Пирĕн республикăри колхозсен, çĕрĕç, совет тата парти органĕсен халех тумалли задачи — пĕтсе ларнă сад-пахчисене çĕнĕрен лартса тăвасси, колхозсенче çĕнĕ сад-пахчисемпе çырла пахчисем лартса ӳстересси, çурт çумĕнчи участоксенче сад йывăççисем лартасси пулать. Пирĕн республикăра сад-пахчисене çĕнĕрен чаца кăлармалла. Кашни колхозăн сад-пахчисемпе çырла пахчисен лаптăкĕ 3—5 гектартан кая ан пултăр. Çак ĕçе тума колхозсенче садоводсем, ялан бригадăсем е звеносем уйăрса хумалла.

Колхозсенче ĕçе планласси тата вăйсене тĕрĕс вырнаçтарса тухасси

Суракине ăнăçлăн ирттересси нумай енчен организациллĕ ыйтусене тĕрĕс татса панинчен, ĕçе лайăх планланинчен, ĕç вăйĕпе туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнинчен килет. Пăрачкавпа Çĕмĕрле районĕсене тĕрĕслесе тухни çав районсенче организаци тĕлĕшпе питĕ пысăк ситменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Çав районсенчи нумай колхозсенче производство планĕсене счетоводсем çеç çырса хатĕрлеççĕ, вăл ĕçе актива явăçтармаççĕ, производство планĕсене колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явмаççĕ, уйхир бригадисенче час-часах обезличка пулать, вĕсенче яланхи звеносене ячĕшĕн кăна тăваççĕ, вăл звеносене участоксем уйăрса памаççĕ. Кашни çынна хăйĕн ĕçĕ тăрăх тӳлес йĕркене начар пурнăçласа пыраççĕ. Суракинче хирти ĕçсене пуринчен ытла çамрăксене, çитĕнсе çитмен ачасене хутăштараççĕ, колхозсенче ача яслисемпе площадкисем усмал пирки тата пĕрлешсе апатланас ĕçе йĕркелемен пирки, хĕрарăмсем хирти ĕçсене хутшăнмаççĕ. Опытлă колхозниксем те суракине сахал хутшăнаççĕ, вĕсем пуринчен ытла пулăшуллă ĕçсене е ытти пĕчĕкрех ĕçсене туса тăраççĕ. Çавăн пирки вара сураки вăхăтĕнче çĕре начар ĕçлеççĕ, туртăм вăйĕпе çителĕклĕ усă курмаççĕ, çурхи ĕçсене вăрăма яраççĕ. Çапла ĕçленине пула вара тыра начар пулать. Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем колхозсенче ĕçе мĕнле организацилениие сахал интересленеççĕ, çак ыйтусене ĕнтĕ сураки пуçланиччен татса парас пулать. Суракине пур енчен те лайăх хатĕрленмелле, ăна йĕркеллĕн, кĕске срокра тата лайăх туса ирттермелле.

Пусуçаврăнăшĕсенче культурăсене мĕнле ылмаштарса пымаллине пĕлсе çитмелле. Сураки планне туна чухне ялхуçалăх культурисене колхозсем хăйсем йышăннă пусуçаврăнăшĕсемпе тата çавăн пек пусуçаврăнăшĕсем тумалли плансемпе килĕштерсе вырнаçтармалла тăвас пулать. Колхозсенче сураки пуçланиччен кашни ĕçĕн нормине çĕнĕрен пăхса тухмалла, тĕрĕсрех туса хумалла, производство планĕсене çырса хатĕрлемелле. Суракине тухиччен икĕ эрне малтан МТС-ри кашни трактор бригадин тата колхозри кашни уйхир бригадин çурхи ĕçсен планĕсене çырса хатĕрлесе çирĕплетмелле. Чи опытлă колхозниксенчен сухаçăсем, акакансем, вăрлăх турттаракансем суйласа хурса, вĕсене туртăм вăйĕпе инвентарь уйăрса памалла, вĕсене суракинчи ĕçсен нормисем тата ĕç хакĕсем мĕнлине, суракин ĕçĕсене мĕнле йĕркепе тата мĕнле срокăсенче туса ирттермеллине лайăх ăнлантарса памалла. Коммунистсемпе комсомолецсене чи ответлă ĕçсем хушмалла: акасси, сухаласси тата ытти ĕçсем те. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕн планне туса, ăна кашни бригадăна, кашни звенона çитермелле. Районсен руководителĕсене çакăн пирки асту тарса хумалла: пучахлă тĕштырăсене акас тĕлĕшпе йышăннă нормăсене мĕнпур колхозсен пĕр пăркаламасăр пурнăçа кĕртсе пымалла.

Парти райкомĕсен колхозсенче ĕçе тĕрĕс планланине, тĕрĕс организацилениие контрольлесе тăмалла. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен калакан постановленине пурнăçа кĕртсе пымалла.

Партин политикăллă ĕçне лайăхлатмалла

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăхне малалла ӳстермелли план пирки йышăннă постановленире çакна кăтартса пачĕç: 1944 çулта колхозсен, МТС-сен, совхозсен, выранти çĕрĕç органĕсен тата партипе совет органĕсен тĕп задачи—тырпулсен тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстересси пулса тăрать, терĕç.

Партин пĕтĕм политикăллă ĕçне çак тĕп задачăна шута илсе йĕркелес пулать.

Партин хăшпĕр райкомĕсен çакăн пек ситменлĕх пур: вĕсем ялхуçалăхне çиелтен çеç ертсе пыраççĕ, ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе кампанисем вăхăтĕнче çеç интересленеççĕ, колхоз производствине тĕплĕн пăхса тухмаççĕ. Тĕрĕссипе вĕсен кашни колхозпа уйрăмăн интересленмелле, кашни колхозра ĕçсем мĕнле пынине пĕлмелле, кашни колхоза вăхăтра пулăшмалла. Пирĕн хăшпĕр районсенче колхозсем питĕ нумай пулни партин районри организацийĕсене колхозсене ертсе пыма кансĕрленĕ. Çавăнпа та 6 района пĕчĕклетсе çĕнĕ икĕ район туса хунă. Кунсăр пуçне тата Кувакино, Пăрачкав тата ытти районсенчи темиçе колхоза пĕчĕклетнĕ. Кувакинăпа Пăрачкав районĕсенче иккĕшер МТС тунă. Октябрьски тата Калинино районĕсенче те МТС-сем организациленĕ. Çак ĕçсене ĕнтĕ кайра пыракан районсенче организаци енчен çирĕплетес шутпа тăваççĕ.

Парти организацийĕсен машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕ çине хытăрах çавăрăнса пăхмалла, трактористсен, комбайнерсен тата МТС-сенчи ытти рабочисен кадрĕсемшĕн ялан тăрăшмалла, вĕсен нушисене пĕлмелле, тивĕçтермелле. ВКП(б) райкомĕсен кашни трактор отрядне пĕлмелле. Парти райкомĕсен секретарĕсен трактор отрячĕсен бригадирĕсене, механикĕсене, комбайнерĕсене пурне те тĕплĕн пĕлмелле.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ парти Обкомĕсене МТС-сенчи парторганизацисем енĕпе ĕçлеме ытти ĕçсенчен хăтарнă секретарьсем уйăрса лартма ирĕк пачĕ. Çапла туни МТС-сенче парти ĕçне нумай сӳлĕ хăпартма пулăшĕ.

Колхозсене ертсе пыма тивĕçлĕ район организацийĕсен çакна ялан асра тытмалла: колхозăн шалти пурнăçĕ ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх пулса пырать, çавăнпа та колхозсене тĕрĕс ертсе пырас тени вăл—колхоз ĕçĕсене çав Устав тăрăх туса пырас тени пулать. Хăшпĕр районсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсаççĕ, выранти партипе совет органĕсем колхозсен пурлăхĕпе продукцисене валеçес ĕçе законсăр хутшăнаççĕ. Çапла тума чармалла. Колхозсене администрацилĕ йĕркипе çеç ертсе пынине пĕтерсе лартмалла. Колхозсен председателĕсене çителĕклĕ сăлтавсăр вырантан кăларассине пĕтерсе хумалла, колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене çирĕплетмелле.

Колхозри ĕçсен ăнăçлăхне актив татса парать, çавăнпа та активпа ĕçлесси çине уйрăмăнах хытă çавăрăнса пăхмалла. Колхозниксене йывăрлăхсем çинчен тĕрĕс калаа памалла, вĕсене хальхи лару-тăру çинчен ăнлантармалла, вĕсемпе канашламалла, вĕсен опычĕпе усă курмалла. Колхозниксемпе колхозницăсене колхоз пурнăçне, колхоз ĕçĕсене туса пына çĕрте активлăн явăçтармалла.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче колхозниксемпе колхозницăсем политикăллă пурнăçпа, Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи ĕçсемпе ытларах интересленме пуçларĕç. Парти организацийĕсен задачи—колхозниксен массисен ыйтăвĕсене тивĕçтересси пулать. Вĕсен колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе тимлĕн туса пымалла.

Тӳрех калас пулать, пирĕн райкомсен оргинструкторски отделĕсем ялхуçалăхĕн кирлĕ ыйтăвĕсенчен аякра тăраççĕ-ха. МТС-сенчи парторганизацисене çирĕплетессипе, коммунистсене ĕçре тĕрĕс вырнаçтарса тухасси, трактор отрячĕсенче партипе комсомол групписем тăвасси, колхозсенчи парторганизацисене пулăшасси — оргинструкторски отделсен хисеплĕ обязанноçĕ пулса тăрать.

Колхозниксем хушшинче партин политикăллă ĕçне туса пынă чухне агитаципе пропагандăн тата воспитани ĕçĕн пур майĕсемпе те усă курмалла. Докладсем, калаçусем, лекцисем, хаçатсем, радио тата сăмахпа агитацилесси, — çаксем пурте кирлĕ те паха майсем пулса тăраççĕ. Политикăллă ĕçе пур колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче те тумалла. Ялти коммунистсем дисциплинăна çирĕппĕн пăхăнмаллине, вăйа шеллемесĕр ĕçлемеллине кулленхи ĕçре кăтартса пыма тивĕçлĕ. Вĕсем социализмлă ăмăртăва пуçаракансем пулмалла. Коммунистсемпе партире тăман активсем ĕçĕн ответлă участокĕсенче пулмалла.

Кашни агитаторăн тата агитколлектив ĕçĕшĕн парти организацийĕ, парти организацийĕ çук çĕрте—комсомол организацийĕ ответлă пулса тăрать. ВКП(б) райкомĕсен агитколлектив руководителĕсене час-часах пуçтарса, вĕсене ĕçлеме вĕрентмелле, ĕçре пулăшмалла.

Сураки вăхăтĕнче колхозсенче кăтарту хăмисем, хисеп хăмисем, куçса çӳрекен ялавсем, фотовитринăсем организацилемелле. Плакатсемпе, лозунгсемпе усă курмалла.

Агитациллĕ ĕçе организациленĕ çĕрте стена хаçачĕсем пысăк выран йышăнса тăраççĕ. Кашни колхозрах стена хаçачĕсем, боевой листоксем кăларса тăмалла, унта выранти пурнăçа тĕплĕн çутатса пымалла.

Ертсе пыракан работниксен колхозсенче уйăхра пĕр хутран кая мар политикăллă докладсем тумалла.

Парти организацийĕсене комсомол пысăк пулăшу пама пултарать. Парти райкомĕсен тата пуçламĕш парторганизацисен комсомол организацийĕсене кулленех ертсе пымалла, вĕсен ĕçне сураки вăхăтĕнчи задачăсене пурнăçа кĕртсе пырас май йĕркелемелле. Кашни колхозрах лайăх ĕçлеме пултаракан комсомол организацийĕ пултăр.

Массăллă-политикăллă ĕçе организацилес тĕлĕшпе ялти çутĕç учрежденийĕсен нумай ĕçлемелле. Вулав çурчĕсен, колхозсенчи клубсен, библиотекăсен ĕçне татăклăнах лайăхлатмалла. Вĕсем сураки вăхăтĕнче политикăллă агитаци ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе партипе комсомол организацийĕсен активлă помощникĕсем пулса тăмалла.

ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен ĕçне те татăклăнах çĕнетсе лайăхлатмалла, вĕсен организаторла ĕçне ӳстермелле.

Республикăра тухса тăракан хаçатсем, кино, радио хыпарĕсем ялсене вăхăтра çитмелле тăвас пулать.

Сураки вăхăтĕнче партиллĕ-политикăллă ĕçе парти райкомĕсем ялти пуçламĕш парторганизацисен йышне татăклăнах ӳстерсен тата вĕсене çирĕплетсе пырсан кăна ăнăçлăн организацилеме пулать. Калас пулать, пирĕн ялсенче пуçламĕш парторганизацисен хисепĕ калĕ те пĕчĕккĕ-ха. Республикăри 1.730 колхозран 237 колхозра кăна парторганизаци пур, кандидатсен группи 123 тата 519 пĕччен коммунист пур. Малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсене партие илес ĕçе вăйлатса, колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисен йышне ӳстерес пулать.

Колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисен хисепне ӳстернипе пĕрлех партиллĕ-организациллĕ ĕçе лайăхлатмалла, коммунистсен политикăллă выранне, пуçламĕш парторганизацисен организаторла выранне ӳстермелле.

Парти организацийĕн мĕнпур ĕçĕсене коммунистсене парти хушнă пек воспитани парас майпа йĕркелесе пымалла, вĕсене кулленхи ĕçре çул кăтартса, идея тĕлĕшĕнчен пиçĕхтерсе пымалла. Вăл хăйĕн авангардлă выранне колхозри кирек мĕнле ĕçре те кăтартма тата массăсене хăй хыççăн илсе кайма пултартăр.

Парти организацийĕсем умĕнче ялхуçалăх тĕлĕшпе питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Çак задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме пĕтĕм партипе совет аппаратне, парти активĕн анлă сийĕсене мобилизацилес пулать.

Парти организацийĕсен кисеплĕ задачи вăл—партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе пĕрмай лайăхлатса пырасси, парти организацийĕсен пултарулăхне çĕклесси, ĕççыннисен анлă массисене большевиксен партийĕ тавра пĕтĕçтересси тата суракине ăнăçлăн ирттермешкĕн, 1944 çулта тухăçлă тырпул туса илмешкĕн мобилизацилесси пулса тăрать.

Социализмлă ăмăртăва сарса пырса, ялхуçалăхне малалла аталантарар, фронта татах та вăйлăрах пулăшса, тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкас сехете çывхартар! (Алă çупаççĕ).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —9—23.

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № [illegible]